Митта В.
83.3 чув.
С 15
М 66

Чăваш Республикинчи
Наци библиотеки
Чăваш наци литературипе
библиографи пайĕ

# “Çак юрра эп ахаль мар юрларăм...”

(Митта Ваçлейĕ çуралнăранпа 90 çул çитнĕ май)
Литература касĕн сценарийĕ

Шупашкар
1998

Илемлетнĕ зал. Сцена çинче Митта Ваçлейĕн сăнӳ керчĕкĕ. Залра сăвăç пултарулăхĕпе хатĕрленĕ кĕнеке выставки.

Сире Митта Ваçлейĕн пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен хатĕрленĕ литература касĕ ирттермелли сценари сĕнетпĕр.

Уяв хыççăн сăвăçăн сăввисене вулакансен конкурсне ирттерме пулать.

<u>1–мĕш е.п.:</u> Эй, хĕвел! Çурхи ытамăм
Пĕр сана çеç хапсăнать.
Эй, хĕвелĕмсĕм,
Тытам–и,
Пăчăртам–и эп сана?
("Çурхи кăмăл")

<u>2–мĕш е.п.:</u> Паян эпир сирĕнпе чăвашсен паллă поэчĕ Митта Ваçлейĕ çуралнăранпа 90 çул çитнине паллă тума пуçтарăнтăмăр. Пултаруллăхăн шăпи пĕр пек килмест. Митта Ваçлейĕн пултаруллăхне илсен, унра та хăйне евĕрлĕ шăпине куратпăр. Хăй калавĕ тăрăх, тăван çĕршывĕ" сиктермен кĕленче сăпкара, макăрсан пыл хуман" туги–çăварне. Поэтăн çырма пуçланă тапхăрĕ вăраха кайман. Ăнкаруллă çамрăк, сăвăсене ачаран тенĕ пекех чунтан юратнăскер, поэзи мĕн иккенне часах чухласа илнĕ. Пуçласа çырнă сăввисем унăн чиперех шăранса тухнă.

– Митта Ваçлейĕ аса илнинчен: "Эпĕ 1908 çулхи мартăн 5–мĕшĕнче Аслă Арапуçĕнче (Патăръел районĕ) чухăн хресчен çемьинче çуралнă. Атте те, анне те хут пĕлмен чăвашсем пулнă...

...Илемлĕ литературăна мĕн ачаран юратнă темелле, пуçламăш шкулта вĕреннĕ чухнех ăна чĕререн кăмăллаттăм. Пушкинпа Гоголь кĕнекисене касса кайса вулаттăм, юратнă сăвăссене пăхмасăр калама вĕренеттĕм...

Чăваш поэзийĕн ытарайми илемĕпе ("Арçури", "Нарспи" произведенисемпе) паллашни пуçăмра хам вăя виçсе пăхма хĕтĕртекен шухăш хускатрĕ: ун пек кĕнекесене çынсемех çыраççĕ иккен, чăвашсен хăйсен те сăвăççем пур...

Чăвашсен Ульяновскри педагогика техникумне кĕнĕ вăхăтра, 1924 çулта, хам сăвăсемпе çырса тултарнă самай хулăн тетрадь пурччĕ манăн, каярахпа çав сăвăсенчен хăшпĕрисем пичетленсе те тухрĕç..."

Методический
отдел

— Çамрăклăх — чапла ят.
Чап ун кивелмĕ те чакмĕ.
Çамрăк шелле мĕ вăя.
Вăй ун —
Вулканăн вучахĕ.
Чăнкă, сулмак кăкăрта
Çамрăк чĕремĕр—турбина.
("Çамрăклăх")

Çирĕме те çитмен поэтăн ячĕ çыракансем хушшинче кăна мар, вулакансем хушшинче те хăвăртах палла ят пулса тăнă. Вăл вара пирĕн литературăна яланлăхах кĕрсе юлнă.

—Чăваш поэчĕсем, пурте тенĕпе пĕрех, поэзи çурчĕ умне, тăри юррине тăнла—тăнла, суха кассипе утса тухнă. Митта Ваçлейĕн малтанхи сăввисенчи тĕп тематика — ял пурнăçĕ, çамрăклăх, киввипе çĕнни, поэтăн пурнăçри вырăнĕ. Паллах, вĕсем хушшинче чикĕлесе юпа лартман, вĕсем пайтах сăвăсенче пĕр—пĕринпе пĕрлешсе каяççĕ. Анчах поэта, ялта çуралса ÿснĕскере, уй—хир ытларах илĕртет. Вăл унăн ача чухнехи сăпки кăна мар, поэзи сăпки те:
Аслă улăхăн ешĕл хускавĕ
Хумхантарнă пире ачаран.
Çавăнпа — юрăра унăн шавĕ,
Пирĕн юррăмăр — хир те çаран.
("...Тĕнчере хĕрĕх те пĕр илем, теç,—...")

—Митта Ваçлейĕ хир—улăхĕсем, вăрман—çарансем, халăхăн ĕçĕ—хĕлĕсем, уявĕ—йăлисем, юррисем çинчен, вĕсене чунтан юратса, пайтах илемлĕ сăвăсем çырнă. Акă мĕнле сăрăсем тупать вăл тăван чĕлхере хăй çуралнă çĕршывне хут çине ÿкерсе кăтартма:
Ак чечен сад пахчи, аппан шур пирĕ пек.
Çурхи кун шуралса, ыр шăршне вал саратъ...
<...>Ял хĕрри укăлча. Симĕсленнĕ калча,
Хĕвелпе пĕрлешсе, йăрăм—йăрăм юхать.
("...Сиктермерĕн мана кĕленче сăпкара...")

—Анчах уй — хире поэт куçа савăнтаракан илемшĕн кăна савмасть, вăл уншăн — "пурлăх амăшĕ". Пурлăх тени хăй тĕллĕн пулмасть. Çавăнпа та Митта Ваçлейĕн çĕршыв, сут çанталăк, халăхпа унăн ĕçĕ — çаксем пурте пĕрле. Çавсене вăл асра юлмалла, чуна çĕклентермелле сăнласа парасшăн. Акă, хир:

Ир–ирех, хĕвел чаршавĕ
Хĕрелсе çĕклениччен,
Тапранать хĕрӳ ĕç шавĕ
Сан тулли кăкру çинче.
("Тупа")

Акă, улăх:
Çĕкленсем, вăй–хал! Ыткăн тилмĕрсе
Сарă кайăкăн ирĕк сассипе.
Чашлаттар, çавам! Курăк хирĕлсе
Юлтăр пĕр енне касси–кассипе.
("Утă çинчи ир")

– Митта Васлейĕ, чи малтанах, çырма–шырама пикеннĕ–пикенменех, революцилле авангард поэчĕн Çеçпĕлĕн ĕçне малалла тăсакансен ретне тăрать. Вулакана унăн чарусăр уçă кăмăлĕ, сăввисен чĕрене пырса тивекен лиризмĕ, туйăмсем кĕтмен çĕртен каплана–каплана килни килĕшет. Çамрăк чăваш поэчĕсене "ылтăн кăтраллă ывăлăн, йывăç пуртлĕ Рассей юрăçин" Сергей Есенин сăнарĕпе пултарăвĕ илĕртет: "Выткался на озере алый свет зари..." тата ытти те. Çакăн еврĕлерех йеркесем Митта çырнисенче те тĕл пуласçĕ:

Ах, Шура, Шура! Шурĕ, шурĕ
Ирхи шур çамрăклăх пĕрле.
Ирхи кунсенĕн абажурĕ
Асамат пек пире тĕрлет.
("...Юлташлăхра телей иккен мĕн...")

–"Çеçпĕлле–есенинла" юхăмран ун чухнехи литература пурнăçĕнче самаях шикленнĕ. Часах "есенинщина" тесе айăплама пикенеççĕ, унтан, каллĕ–маллĕ шутласа пăхнă хыççăн, "хузангайщина" ăнлава хута яраççĕ... Митта вара çав–çавах чăрсăррăн çырать:

Упаленет антранă уйăх,–
Çапса ӳкер ăна чулпа!..
<...>Поэт тени пит чăрсăр çын вăл,–
Мĕскер шутлать– çавна тăвать:
Сатхуллă уйăх– сăнсăр символ–
Ак кутăн–пуçăн ывтăнать.
("Тавралăх шуçăмпа хĕрелнĕ...")

–Поэт мăшăрĕ Нонна Еремеева– Митта аса илнинчен:"...Вăл Есенин сăввисене каçса кайса кăмăлласа

вулатчӗ, куҫаратчӗ. Ҫавна пулах комсомол енӗпе айӑпа та кӗчӗ – ӑна "юсанма" ҫулталӑклӑха яла ячӗҫ. Вӑл пӗр вӑхӑт Ульяновскран инҫех мар Каша ялӗнче пӗрремӗш класс ачисене вӗрентсе пурӑнчӗ...".

Ялта колхоз юхӑмӗ ҫӗнтерни ҫинчен ҫырнӑ "Ҫӗр чӗлхи" поэма ( малтан "Хулӑм сас" ятлӑ пулнӑ ) тата "Атӑл ҫинче", "Кӗреке юрри", "Акатуй каччисем" сӑвӑсем Митта Ваҫлейӗн 30–мӗш ҫулсенче ҫырнӑ паллӑрах произведенийӗсем шутланаҫҫӗ.

Ӗҫри ӗҫчен пек Атӑл кӑнтӑрла:
Вылять ун ҫийӗн тӗтӗм те ӑрша...
Кунта мухтавлӑ тинӗс пулмалла,
Эппин ӗҫлер–и, тусӑм, тӑрӑшса!
("Атӑл юрри")

–1934–мӗш ҫулхи февралӗн 7–мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫыравҫӑсен пухӑвӗнче Аркадий Золотов тухса калаҫнӑ. Вӑл вӑхӑтри Митта Ваҫлейне "творчествӑра та, практикӑлла пурнӑҫра та хулиган пулнӑ" тесе асӑнать. Н.Васильев та "Краткий очерк истории чувашской литературы" (1930) кӗнекинче "...Хусанкай ҫулӗпе утакан Митта Ваҫлейӗ, хӑйӗн ертӳҫинчен ҫамрӑкрахскер, национал–шовинистла сӑвӑсем ҫырнӑ, ҫав сӑвӑсенче революциллӗ хавхаланӑва Есенинӑн "никама кирлӗ мар уйӑхӗпе" тата Улӑппа – чӑваш халӑх поэзийӗнчи асамлӑ сӑнарпа – пӑтраштарнӑ... Митта хальхи вӑхӑтра ерипен тӑна кӗме пуҫларӗ",– тенӗ.

–Литература хроникинчен:"1936 ҫулхи сентябрьте чӑваш ҫыравҫисен троцкистсемпе зиновьевецсен партие хирӗҫле банди майлӑ ӗҫлекенсене тупса палӑртас тата тӑрӑ шыв ҫине кӑларас тӗллӗшпе ирттернӗ пухӑвӗ пулса иртнӗ". 1937 ҫул ҫывхарнӑ...

– 37–мӗш ҫулхи апрель уйӑхӗ вара Митта Ваҫлейӗн биографийӗнче чи тата́клӑ самант пулса тӑрать. Ҫак уйӑхра пулса иртнӗ чӑваш ҫыравҫисен пухӑвӗнче вӑл вырӑсла анлӑ сӑмах тухса каланӑ. Хӑйӗн сӑмахӗнче поэт чи сивӗч темӑна – наци ыйтӑвне – хускатнӑ: "...Ку ыйтӑва эпир, чӑвашсем, кирлӗ пек татса паман–ха. Эп ҫак йышши таса туйӑмсемшӗн ҫынсене националист тесе айӑплама юрамасть тетеп".

– "Ваҫлее 1937 ҫулхи декабрӗн 18–мӗшӗнче тытса кайрӗҫ. Килесе ҫӗрле, вуниккӗсенче, килчӗҫ... Ун чухне темшӗн ытла та айӑччӗ. Картишне тухрӑмӑр. Шыв юхать. Кӳ

ленчӗксем тӑрӑх Ваҫлей кӑҫатпах утса кайрӗ...".– тесе аса илет кайран Н.К.Еремеева–Митта.

– Ҫунатӑм, юлагӑн. Ан макӑр,
Салтак пек маттур уйрӑлар.
Ман ҫул – ҫӑлтӑр витӗр – тап – такӑр,
Ман ҫул – куҫҫуль витӗр – уяр.
<...>Пире ҫурҫӗр ҫилӗ ытлалӗ,
Ачашлӗ кӑра шартлама.
Ҫуталӗ жандармӗн медалӗ,
Вӑл памӗ ҫупра аташма.
("Пуҫ янисен юрри")

– Митта Ваҫлейӗ 1944 ҫулхи сентябрӗн 10–мӗшӗнче арӑмӗ патне ҫырать: "Таврӑнатӑп эп вӑрӑ–хурах пек, ӗмӗрлӗхе чун канлӗхне ҫухатнӑ ҫын пек, ҫын ҫине тӳррӗн пӑхма пултараймансккер, хастарлӑха, хӑюллӑха ҫухатнӑскер. Ҫакӑн пек ҫын упӑшка пулма пултараймасть, пулсан та – килйыша телейлӗ тума хӑват ҫитерейместь... Паллах, вӑрҫӑ хыҫҫӑн пире кунта тытас ҫук. Эпир таврӑнӑпӑр. Хам валли эпӗ пӗр–пӗр аякри кӗтесе суйласа илӗп, Чӑваш тӗпелӗнче мар, кӗтмен тата паллӑ мар хӑнасем ларакан ҫӗре вырнаҫӑп, ятсӑр тарҫӑ пек кунӗн–ҫӗрӗн ӗҫлӗп, анчах хамӑнне тӑвӑп!.."

– Тап–тап пусса, кал–кал утам–и,
Кисретӗр цементлӑ урай.
Ҫӗлен пек сӑнчӑрӑн ытамӗ
Ан пустӑр шӑнӑра пӗрмай.
("Вунтӑваттӑ ҫапсан")

– Чӑваш поэчӗ лагерьти хӑрушла йывӑр пурнӑҫӗнче те чун–чӗрине вараламаннине, хӑйне яланах таса, чӑн–чӑн ҫын пек тытнине ӗнентерекен пӗр хаклӑран та хаклӑ хут пур. Митта биографӗсемпе унӑн пултарулӑхне тӗпчекенсен аллине вӑл 1987 ҫулхи май уйӑхӗнче тин лекнӗ. Ку вӑл СССР халӑх учителӗн Михаил Андреевич Алексеев ҫырӑвӗ:"...Пӗтӗм пурнӑҫӑм тӑрӑшшӗпех эп Василий Митта чӑваш писателӗн сутӑ сӑнарне асран ямасӑр пурӑнатӑп. Унпа эп таса пирӗштипе тӗл пулнӑ пек, ман пурнӑҫӑм тулат вӗҫӗнчех пулнӑ чух тӗл пултӑм. Вӑлах мана выҫса вилесрен ҫӑлса хӑварчӗ.

...Лагерь пуҫлӑхӗсем кашни зеках пахчаҫимӗҫ хранилищинче ӗҫлеме вырнаҫтарайман. Анчах та Василире вӗсем те чӑн–чӑн ҫын курнӑ, ҫавӑнпа ӑна упрама тӑрӑшатчӗҫ. Василий Митта, хӑй те асапланнине пӑхмасӑр, пултарнӑ

таран лагерьти халăха пулăшатчĕ. Хăйĕн çынлăхне пула вăл лагерьте ларакан кашни çыннăн хисепне тивĕçлĕ пулчĕ."

– "Хам ирĕке тухнине творчество командировки пек йышăнăп эпĕ, каçса – антăхса кайиччен ĕçлĕп, çичĕ çул хушшинче тума пӳрменнине пĕр–ик çул хушшинче компенсацилеме тăрăшăп". Çак сăмахсене поэт хăй умĕнче тупа тунă пек йышăнать, нимĕнле терт–асап та ăна пултару ĕçĕнчен пистерме пултарайман иккен, этемĕн чун вĕçевне тыткăна илес çук.

– Е кĕтнĕ кун çитес пулсан пĕр те пĕр,
Эп çунăп иртнĕ хĕрӳпех,–
Ăмăртава тухан яш–кĕрĕм евĕр,
Вăй–кил кӳрген мăн кĕрӳ пек.

Эп таврăнăп йăвашшăн та хаяррăн,
Çĕршыв туйĕ–çуйĕ тапратнă чух.
Хавхаланулла такмаксем хайларăм,
Туйĕ намăсне ярассăм çук.

("Икĕ çыру")

– Çапла, 1947 çулхи декабрьте Митта Ваçлейĕ тăван ялне таврăннă. Хăйĕн пĕрремĕш срокĕ – шăпах вунă çул – вĕçленнĕ хыççăн. Уяв та, савăнăç та, паллах, пулман. Митта шкулсенче ĕçлет: малтан бухгалтер, кайран учитель те пулса курать. Пурпĕрех ку вăхăтри пурнăçне этем ретлĕ пурнăç теме çук. Хулана çитсе курма юрамасть, сăнасах тăраççĕ. Шупашкарта вара – çемйи, ачисем... Ерипен Митта литература ĕçне те пусăнса пăхать, Лев Касилĕн "Аслă хирĕçтерӳ" романне чăвашла куçарать. Анчах...

– Н.К.Еремеева–Митта аса илнинчен: "Ваçлей пире курма хулана килчĕ. Çуркуннеччĕ, апрель. Эпир унпа хула тăрăх уçăлса çӳрерĕмĕр, унтан эп ăна ăсатма станцие кайрăм. Унăн яла таврăнмаллаччĕ. Унта эпир самантлăха пĕр–пĕрне çухатрăмăр, кайран пăхатăп та, вăл çук та çук. Ăна тепĕр хут пуçтарса кайнине ăнланса илтĕм. Пире малтан пуçласах йĕрленĕ пулас..."

– Спасибо! Савса ывăлларĕ
Мана Сармантей самани.
Юрлар–и, кулса уйрăлар–и?
Тен, ĕмĕрлĕхех... чун савни!..

("Пуç янисен юрри")

– Акă ĕнтĕ Красноярск крайĕ, юханшывăн чăнкă та чуллă çыранĕнчи йывăç пӳрт.

Кам айăплă? Мĕн–ма çӳреççĕ
Ним хӳтĕсĕр? Ăста хӳтти?
Йăлт! çĕкленеççĕ те сӳнеççĕ,
Сӳнми çунаç сӳнсессĕн тин?
("Ссылкăри Митта". М.Сениэль)

– Ссылкăри çулсенче поэта çине–çинех çуралса ӳснĕ ен аса килет, унăн чунĕ çак асаплă çулсенче те тăван кĕтесне, сывăх çыннисене юратнине упрать.

Эс курнă тĕнчере чĕр тамăк,
Эп курăп çăлăнăç кунне!
Саламлăн усăлать ытамăм
Паян, çĕршывăм, сан енне.
<...>Телейлĕ ачисем Адамăн –
Умра ыр шанчăк пур чухне.
Тĕп пултăр тĕнчери чĕр тамăк!
Çул пултăр çăлăнăç кунне!
("Икĕ çыру")

– 1954 çулхи юпа уйăхĕнче Митта Васлейĕ тăван çĕршывне таврăнать. Пурнăçне кăштах йĕркене кĕртнĕ–кĕртменех вăл культурăпа литература ĕçне хастаррăн пуçăнать. Писательсен Союзĕн правленийĕн литература консультанчĕ, "Тăван Атăл" альманахăн яваплă секретарĕ пулса ĕçлет, çĕнĕ сăввисене, куçарăвĕсене пичете хатĕрлет. 1955 çулта М.Горькийăн Митта чăвашла куçарнă "Фома Гордеев" романĕ иккĕмĕш хут пичетленсе тухать. Сăвăçă хайĕн поэзи цехĕнчи ĕçтешĕсен пултарулăхне сăнасах–тишкересех тăрать. Çамрăк çыравçăсем патне ĕçлеме хавхалантаракан, шанчăк паракан çырусем çырать, пичетре ун тарăн шухăшлă критика тишкерĕвĕсемпе рецензийĕсем кун çути курассĕ.

– Пурте кăсăклантарать сăвăçа: чăваш театрĕн çĕнĕ спектаклĕсем те, чăвашсен çамрăк сăвăçисен хайлавĕсем те, Лакрей вăрманĕнчи юрă уявĕ те, чăваш оперин пуласлăхĕ те. Унченхи пекех вăл нацилĕхпе интернацилĕхĕн шайлашăвĕ пирки шухăшлать.

– 1956–1957 ç.ç. хайĕн кун кĕнекине çырса пынисенче Митта каллех тăван чĕлхепе культурăн пуласлăхне ăнланса илме тăрăшать, хайĕн пурнăçĕн сăнне тĕпе хурса, поэт

тивӗҫӗ пирки шухӑша пулать: "Ҫыннӑн чи пысӑк ӗҫӗ – ҫынна ыра тӑвасси мар, ҫынна усал тӑвасран хӑйне хӑй чарасси. Эпӗ кирек мӗнле ҫынна та ҫапла каласшӑн: эсӗ мана ырӑ ан ту, анчах мана усал тӑвасран та хӑвна ху чар. Ҫынсем пурнӑҫра ҫак йӗркене ҫирӗппӗн пӑхӑнса пурӑнсан, тӗнче йӑлтах урӑхла пулӗччӗ."

– 1956 ҫулхи декабрьте тинех Митта сӑввисен "Кӑмӑлтан" кӗнеки тухать. Ку кӗнеке вӑл – ирӗксӗртен чӗнмесӗр пурӑнма тивнӗ ҫулсене, юрлӑ–пӑрлӑ ҫулсене тата хӑйне вӑйпа тӑван чӗлхипе культуринчен уйӑрнине ҫӗнтерни.

Эп таврӑнтӑм! Тӑванӑм алӑ пар!
...Чыса, чуна ҫитертӗм эп тасан,–
Пурнать этем, чун чысӗ сыв пулсан!
("Урасӑр")

– 1958 ҫулта пулса иртнӗ чӑваш ҫыравҫисен съездӗнче тунӑ "Поэзири пысӑк ӑсталӑхшӑн" докладӗнче Петӗр Хусанкай Миттан юлашки вӑхӑтра ҫырнӑ сӑввисене ак епле хаклать: "Поэтӑмӑр тӑван сӑмахӑн тутине пӗлсе, ӑна перекетлӗн тыткаласа ӗҫлетчӗ. Унӑн ҫырса пӗтерейман "Тайӑр" поэма сыпӑкӗсем, "Авалхи садӑмра", "Тав сана", "Пит маттур–ҫке Иванов бульварӗ" тата ытти нумаях та мар сӑввисем юлашки вӑхӑтри темӗн чухлӗ шупка сӑвӑ–юрӑ ҫинче чӑн–чӑн ӗнчӗ пӗрчисем пек йӑлтӑртатса тӑраҫҫӗ. Халӑх чӗлхи, наци сӑн–сӑпачӗ, сахал сӑмахпа нумай калама пӗлни, таса кӑмӑл, вӗри чӗре таппи, тарӑн шухӑш – акӑ мӗн туять вулакан Митта сӑввисенче."

– Миттан юлашки вӑхӑтра ҫырнӑ сӑввисем поэзин чи ҫӳллӗ шайне ҫӗкленнӗ. Вӑл этем трагедийӗ ҫинчен те ( ку сӑвӑсене "лагерьте ҫырнисем" теме пулать) найкӑшмасӑр, туррӗн те хаюллӑн, нумай тӳснӗ хурлӑхла сын пек ҫырать. Поэтӑн кӗрхи кунӗпе ун "ик куҫ тулли илемӗ", ӗлкенлӗхӗ нумая тӑсӑлтман пулсан та, мӑнтарӑн чӗри тек тӳсме хал ҫитереймен. Тӑван ялне акатуя юлашки хут кайсан, 1957 ҫулхи июлӗн 10–мӗшӗнче поэт вилсе каять. Ун умӗн мартӑн 6–мӗшӗнче кун кӗнекине вӑл ҫапла ҫырать: "Ӗнер 49 тултартӑм. Тата ҫакӑн чул пурӑнсан ҫитет. Пурӑнас кӑмӑл тем пысӑкӑш, анчах мехелӗ ҫавнашкал. Чӗре япӑх. Пурнӑҫ тиевне тапса туртни туйӑна пуҫларӗҫ."

– Миттана пытарма Шупашкартан ҫирӗм ытла ҫыравҫӑ, Мускавран Петӗр Хусанкай ҫитнӗ. Чӑвашӑн пысӑк

поэтне хайсен юлашки сăмахне калана. Вара виттăпри пуçне лартнă палăк çинче ĕмĕр манми сăмахсем кăна юлнă:

Ан тив, хисеп те, чыс та ан курам.
Пин юррăмран пĕри анчах юлайтăр,
Ăна тăван ыр кăмăлпа юрлатăр,–
Вара ман канлĕ пулĕччĕ тăпрам.

("Икĕ çыру")

–Çыравçăн, ӳкерӳçĕн, ăсчахăн тата ыттисен вĕçленеймен, туса пĕтерме ĕлкĕреймен ĕçĕсене те шута илмелле.

1955–1956 çулсенче Митта хăйĕн сăввисен пуххине, кивĕ тата çĕнĕ куçарусене, статьясемпе рецензисене пичетлет, унччен çырав ĕçĕпе кал–кал ĕçлеймен вăхăта çĕрĕн–кунĕн ĕçлесе саплаштарма тăрăшать, çĕнĕрен те çĕнĕ ĕмĕтпе хавхаланать. Анчах вилĕм "шăраннă хурçă пек таса" сасă янравне сасартăк татать, поэтăн туса ĕлкĕреймен ĕçĕсем ĕмĕт халлĕнех юлаççĕ.

–1954–1955 çулсенче, Митта чăваш чĕлхин вăйне сулăмлăн кăтартас тĕллевпе Л.Толстойăн "Вăрçăпа мир" романне куçарма шут тытать. Уйрăм сыпăкĕсене куçарса та хунă, анчах ытти ĕç хупланипе малалла каяйман.

–Куçарусăр пуçне, Митта хăй те прозăпа роман çырма ĕмĕтленнĕ. Вăл пулас хайлав валли уйрăм сăнарсене палăртса хума та ĕлкĕрнĕ, хăш–пĕр кирлĕ материалсене те пухнă. Шел, ĕçе кунтан ытла тума тӳр килмен. Анчах та:

Вăл çеç çук. Ăна тупаймăн
Сакă пысăк çĕр çинче.
Сак çинчен тăрса, пуç таймĕ
Вăл сана çурт умĕнче...

("Митта вилсен". Г.Айхи)

–Паян Митта Ваçлейĕ 90 çул тултармаллаччĕ. Вăл чăваш халăхĕ валли пин юрă таран çырса хăварайманĕ. Анчах юрăсене шутпа кăна хисеплемеççĕ. Вĕсене ытарайми илемĕ пуртан юрлаççĕ. Çав юрăсем пек, чăваш поэзине ĕмĕрлĕхе кĕрсе юлнă сăвăсем Митта Ваçлейĕн сахал мар. Унăн сĕтеклĕ сăмахĕ яланах пирĕнте пурăнать. Ахальтен мар вăл хăй çинчен: "...ĕмĕр ахаль иртмерĕ"– теме тивĕçлипе пултарнă.

## Усă курмалли литература.

Митта В.Е. Кăмăлпа шухăшăм/ А.Алган умсăмахĕ.—Шупашкар: Чăвашгосиздат, 1959.— 386 с.

Митта В.Е. Кăмăлтан: Сăвăсем — Шупашкар: Чăвашгосиздат, 1956 .—152с.

Митта В.Е. Кĕрхи илем: Сăвăсем, поэмăсем/ И. Микулайĕн умсăмахĕ.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд—ви, 1978.— 144 с.

Митта Ваçлейĕ пурнăçĕпе пултарулăхĕ/ Г. Юмарт пухса хатĕрленĕ.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд—ви, 1974.— 176 с.

Митта Ваçлейĕ. Çак юрра эп ахаль мар юрларăм: Сăвăсем, куçарусем, поэмăсен сыпăкĕсем, тĕрлĕ статьясем/ А. Хусанкайăн умсăмахĕ.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд—ви, 1990.— 175 с.

Артемьев А. Хурçă caслă поэт// Артемьев А. Пурнăç чăнлăхĕпе писатель ăсталăхĕ.— Шупашкар, 1984.— С. 288—300.

Григорьев С. Ырă кăмăллăччĕ// Ялав.— 1989.— N3.— С.14—15.

Давыдов—Анатри В. Ларсам юнашар: [Сăвă]// Ялав.— 1989.— N3.— С.15.

Давыдов—Анатри В. Митта юрри: [Сăвăсем] // Хыпар.— 1997.— Çĕртме(июнь) уйăхĕн 10—мĕшĕ.— С.3.

Давыдов—Анатри В. Тавах, Митта, тав сана!: [Сăвă] // Тăван Атăл.— 1993.— N1.— С.26.

Давыдов—Анатри В. Тус тăванăм Митта// Давыдов—Анатри В. Юлташсемпе юнашар.— Шупашкар, 1981.— С.54—62.

Дмитриев В. Ăшă куçлăччĕ, кăмăллă сăн—питлĕччĕ // Тантăш.—1997.— Ака (Апр.) уйăхĕн 4—мĕшĕ.— С4.

Ефимов Г. Туслăхпа хаярлăх // Ялав.— 1991.— N6.— С.20—22.

Исмуков Н. Сăпайлăх, тӳркăмăллăх, чăтăмлăх, чунлăх// Тăван Атăл.— 1988.— N3.— С.61—62.

Киданов В. Пин юррăмран пĕри анчах юлайтăр...//Ялав.—1989.—N3.— С.15.

Митта В. Саламлăн уçăлать ытамăм паян, çĕршывăм, сан енне: [Кун кĕнекинчен ] // Ялав.— 1990.— N5.— С.26.

Петрова И. Халь те чĕре тĕпĕнче// Ялав.— 1995.— N3.— С.115—116.

Сениэль М. Ссылкăри Митта: [Сăвă]// Ялав.—1996.— N3.—С.49.

Семенова А. Çыру та çӳрететтĕмĕр // Ялав.— 1995.— N3.—С.116.

Тĕнче шайĕнче: [Аса илӳсем]/ С.Григорьева, Г.Васильев, В.Киданов // Ялав.— 1989.— N3.— С.14—16.

Хусанкай А. Митта Ваçлейĕн сырăвĕсем // Тăван Атăл.— 1988.— N3.— С. 63—67.

Шавлы С. Юлташа асăнса: [В. Митта пултарулăхĕ çинчен] // Шавлы С. Кунсул сунталĕ умĕнче.— Шупашкар, 1980 — С.157—165.

Юмарт Г. Митта Ваçлейĕн виттăпри умĕнче:[Сăвă]//Юмарт Г. Кĕмĕл Алтăр: Сăвăсем, куçарусем.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд—ви.— 1988.— С.13.

Юмарт Г. Сумлăрах чыслăр// Хыпар.—1997.—Ака (апр.) уйăхĕн 10—мĕшĕ.— С.4.

Юмарт Г. Çитеймен ĕмĕтсем // Хыпар.—1997.—Çĕртме(июнь) уйăхĕн 10—мĕшĕ.— С.3.

* * *

Митта В. Думы мои, мечты мои: Стихи и поэма / Послесл. М. Юхмы.— М.: Современник, 1976.— 63с.

Давыдов—Анатри В. Митта в моей памяти// Совет. Чувашия.—1991.— 26 апр.— С.4.

Хузанкай А. Дыханье почвы и судьбы // Хузанкай А. Поиск слова.— Чебоксары, 1987.— С.120—128.